25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
8
ЮНКУН
82(6017) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕн участникĕсем славян халăхĕсене чĕнсе калани

Пусмăрти тăван славянсем!

Славянсен ылханлă тăшманне—гитлеризма хирĕç мĕнпур славян халăхĕсем татăклă кĕрешĕве çĕкленмелли вăхăт çитрĕ. Гитлер славян çĕршывĕсенче хăй вăрă-хурахла хуçаланнине пирĕн халăхсен юнĕпе, пирĕн çуртйĕрсене çунтарса янипе, пирĕн нациллĕ пуянлăхсене çаратса пĕтернипе палăртса тунă. Гитлерла бандитсем миллионшар славянсене вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр Югославире кăна нимĕç фашисчĕсем вунă уйăх хушши вуç пулса тăнă тапхăрта çĕршер пин çынна пĕтерсе тăкнă. Польшăра, Чехословакире çĕршер пин çынсем пĕтеççĕ, славян халăхĕсен нациллĕ чечекĕ—ĕç интеллигенцийĕ, наукăпа искусство тата литература деятелĕсем—пĕтеççĕ. Славянсен çĕршер хулисене ишĕлтернĕ, пиншер ялсене çĕрпе танлаштарнă. Югославире, Чехословакире, Польшăра вырăнта ерекен усал чир-чĕрсем хăрушшăн саралнă, Болгарие çаратса юхăнтарса пĕтернĕ. Совет çĕршывĕн оккупациленĕ районĕсенче гитлеровецсем пирĕн тăвансене тискеррĕн мăшкăлласа асаплантараççĕ. Вĕсем авалхи славян çĕрне çаратса юхăнтараççĕ, пирĕн тăвансене—вырăссене, украинецсене, белоруссене тĕнче халиччен курман тискерлĕхпе асаплантарса вĕлереççĕ. Вĕсем старикçене те, хĕрарăмсене те, ача-пăчасене те, чирлисене те, аманнисене те хĕрхенмеççĕ. Каялла чакнă чухне нимĕçсен фашистла çарĕ шартлама сивĕре пирĕн тăвансене хăйĕн умĕнче хăваласа пырать, совет хулисемпе ялĕсене нимĕн юлмиччен çунтара-çунтара ярать, вырăс культурипе искусствин паллă та чаплă памятникĕсене ишĕлтерсе хăварать. Нимĕç оккупанчĕсен тискер хăйăкла ĕçĕсем çинчен ССР Союзĕн Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Вячеслав Михайлович Молотов панă нота—фашистла варварсене айăплласа çырнă хаяр акт пулса тăрать.

Миллион çурă йышлă поляксем, çĕршер пин чехсем, словаксем, хорватсем, словенсем, болгарсем, сербсем, украинецсем, белоруссем, вырăссем нимĕçсен фашистла каторгинче асапланаççĕ, Германире чуралла ĕçре пĕтеççĕ. Сыншăн Гитлер славян халăхĕсене пуçĕпех вĕлерсе пĕтермелли хăйĕн тискер планне мĕнпур вăйпа, мĕнпур майсемпе пурнăçа кĕртме хапсăнать.

Тăван славянсем! Мĕнпур славянсен Мускаври пĕррремĕш митингĕ пулса иртнĕренпе сакăр уйăх иртрĕ. Унтанпа вăрçăри лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕ Хĕрлĕ Çар гитлерла войскăсене хирĕç контрнаступлени туса пынă тапхăрта пухăнчĕ. Нимĕçсен çарне çĕнтерекенни никам та çук текен юмаха Хĕрлĕ Çар хăйĕн геройла кĕрешĕвĕпе сирсе пăрахрĕ, Гитлерăн вăрçă машинине чарса лартма кăна мар, çапса çĕмĕрме те май пуррине ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене кăтартса пачĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем мĕнпур славян халăхĕсене хускатса çĕклентерчĕç, славянсен чĕрисене пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерес шанчăкпа иксĕлми хăватлăн çулăмлантарчĕç, славянсене гитлерла пусмăртан ирĕке кăларассишĕн пыракан кĕрешĕве мĕнпур славянсен çĕршывĕсенче чаплă паттăрсен çĕнĕ отрячĕсене çĕклерĕç.

Мĕнпур славянсен пĕррремĕш митингĕ пулнăранпа Гитлера хирĕçле пĕтĕм тĕнчери фронтăн вăйĕсем вĕçĕ-хĕррисĕр ӳссе çирĕпленчĕç. Ирĕклĕхе юратакан 26 халăх, тĕнчери чи хăватлă государствăсен—Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсем пуç пулса тăнипе, гитлеризма татăклăнах çапса аркатиччен, мĕнпур халăхсене хăрушлăхсăр тата никама пăхăнмасăр пурăнма май туса париччен хĕçпăшала алăран пăрахмалла мар тесе тупа турĕç.

Сĕмсĕр захватчиксем талăнса кĕнĕ çĕршывсенчи халăхсем те, фашистсем тапăнас хăрушлăх умĕнче тăракан халăхсем те мĕнпур цивилизациллĕ этемлĕхĕн пĕрлĕхлĕ ĕçне хӳтлеме çĕкленчĕç. Гитлерăн шăпине малтанах татса хунă. Совет халăхĕ аркатмаллах пыра-пыра çапнипе юн юхтарса хевшаса çитнĕ унăн çарĕ вилĕм патнелле пырать. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă сербсен, хорватсен, словенсен, украинецсен, белоруссен, вырăссен партизанла вăрçи Германипе Итали империалисчĕсене хирĕç тата вĕсен ирсĕр хӳрешкисене—недичсемпе павеличсене хирĕç мĕнпур славян халăхĕсем туса пыракан вăрçă пулса тăрать. Тĕнче халиччен илтмен террора пăхмасăрах, ирĕклĕхе юратакан Польша халăхĕ гитлерла ирсĕрсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленет. Ирĕклĕ те никама пăхăнман Польшăшăн пыракан кĕрешӳ ялавĕ айĕнче Совет Союзĕ территорийĕ çинче поляксен çарĕ организациленет.

Чехословакин пиншер патриочĕсене пĕтерсе тăкнă гитлерла йытăсен юнлă террорĕ те, сутăнчăксен шайки Гитлерăн ура тупанне çуллани те чехсемпе словак халăхĕсен хаяр тарăхупа çĕкленнĕ хăватне кăвшатаймарĕç. Чехословаки халăхне гитлерла пусмăртан ирĕке кăларассишĕн кĕрешме Совет Союзĕн территорийĕ çинче Чехословакин çар чаçĕсем пухăнса йĕркеленеççĕ.

Хăйне ирĕке кăларакан вырăс халăхне чĕререн юратакан, вырăс халăхĕ çине туслăн пăхакан Болгари халăхĕ Гитлер Болгари çарне Совет Союзне хирĕç вăрçа хăваласа кĕртме хăтланнине мĕнпур вăйран аркатса пырать.

Ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем пекех, хăйсен аслă традицийĕсен тата хăйсен нациллĕ культурин никĕсĕ çинче, хăйсен государственноçĕн талккишĕнче мирлĕн те ирĕклĕн аталанма ĕмĕтленекен пусмăрти славянсем пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн чи пысăк йывăрлăхне хăй çинче тӳссе ирттерекен Совет Союзне пĕтĕм чун-чĕререн тав тăваççĕ. Вĕсем аслă совет халăхне, геройла Хĕрлĕ Çара, унăн хăюллă та паттăр полководецĕсене тата Совет çĕршывĕн аслă правительствине хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Пусмăрти тăван славянсем! Тăшмана ĕнтĕ хăватлăн пыра-пыра çапнă, анчах та вăл вăйлă-ха тата этемлĕхе нумай сиен кӳме пултарать-ха. Çапса амантнă, урса кайнă тăшман çĕнĕ авантюрăсем тума пултарать. Гитлерла йытă ушкăнĕсем пире, славянсене, çавăн пекех ирĕклĕхе юратакан ытти мĕнпур халăхсене те, нимĕç çарĕн çуркуннехи наступленийĕ çинчен каçăхса кайса çуйăхнипе хăратма шутлаççĕ. Гитлеровецсем çав майпа пирĕн кĕрешӳри çирĕплĕхе хавшатма тата Гитлера фронтран та, тылран та пĕтерсе тăкмаллах пырса çапассине чăрмантарма ĕмĕтленеççĕ. Хăйсен çурхи наступленийĕ çинчен шавланипе гитлеровецсем Германи халăхне хăйсен аллинче тытса тăрасшăн, Германин вассалĕсене хăйсене пăхăнтарса тăрса, вĕсене вăрă-хурахла çĕнĕ авантюрăсем тума хăваласа кĕртесшĕн.

Славянсен тăшманĕсене, нимĕç захватчикĕсене Хĕрлĕ Çар хĕллехи вăхăтра хăватлăн пыра-пыра çапрĕ. Хĕрлĕ Çар наступленири пуçарулăха хăйĕн аллинчен вĕçертмĕ, нимĕç захватчикĕсене çуркуннепе çулла татах та хăватлăнрах пыра-пыра çапĕ. Фашистла заправиласен, тен, мĕн чухлĕ те пулин вăйсем пухма май килĕ, вĕсем, тен, çĕнĕ наступлени тума хăтланса пăхĕç. Тăшман наступлени тума хăтланса пăхнине ылханлă тăшмана пуçĕпех çапса аркатмалли ĕç туса хурасси славян халăхĕсенчен килет. Тăшмана çапса аркатассине Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалĕпе кăна мар, мĕнпур славян халăхĕсен вăйĕпе пурнăçа кĕртмелле. Кăçалхи 1942 çул Гитлерăн вăрă-хурахла çарне çапса аркатас çул пулса тăма пултарать, вăл çавăн пек пулмалла та. Славян халăхĕсен мĕнпур вăйхăватне тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕре мобилизацилемелле. Кĕрешӳрен аякра тăни, сӳрĕккĕн кĕрешни çак самантра чи пысăк преступлени туни пулса тăрать. Кирек мĕнле иккĕленсе тăни те, кирек мĕнле кĕтсе тăни те, кĕрешĕве ырă самант çитиччен кирек мĕнле каярах хăварса пыни те тăшманшăн кăна усăллă, çакă вăл фашистла оккупантсен пусмăрĕ айĕнчи славянсен асапĕпе хĕнхурне малалла тăсма кăна пултарать.

Тăван славянсем! Славян халăхĕсене гитлерла тиранирен ирĕке кăларасси чи малтан кашни халăх гитлерла оккупантсене хирĕç хăй активлăн кĕрешнинчен килет. Украинецсенчен, белоруссенчен, вырăссенчен, кăнтăрти славянсенчен пример илĕр! Славянсем туса пыракан мĕнпур халăх вăрçин çулăмĕ совет халăхĕ туса пыракан отечественнăй аслă вăрçăпа тата Югославири партизанĕсен геройла вăрçипе пĕрлешсе пĕтĕçтĕр. Ан тив, мĕнпур халăхăн партизанла вăрçин çулăмĕ Невапа Днепр патĕнчен пуçласа Адриатика тинĕсĕ патне çитиччен ялкăшса çĕклентĕр!

Поляксем, чехсем, словаксем, хорватсем, словенсем, сербсем, македонецсем! Славян халăхĕсен ылханлă тăшманĕсене хирĕç—Гитлерпа унăн шайкине хирĕç халăхсен партизанла вăрçине анлăн сарса пырăр. Славян халăхĕсене чуралантаракан гитлерла вăрă-хурахсене пĕр татăк çăкăр та, пĕр тумлам шыв та ан парăр, тырпула пытарăр, выльăх-чĕрлĕхе хăваласа кайăр, çар производствине хирĕç саботаж тăвăр. Гитлерла Германи валли кунран кун сахалтарах та сахалтарах хĕçпăшал туса кăларăр. Станоксемпе машинăсен ĕçне вăрахлантарма мĕн кирлине пурне те тăвăр. Шелсĕр пусмăрçăсем валли эсир хăвăр туса кăларакан хĕçпăшала пăсас тесе мĕн кирлине пурне те тăвăр. Эсир тунă танксем, самолетсем, бронемашинăсем хăвăртрах юрăхсăра тухчăр тесе тăрăшăр. Минăсемпе снарядсене çурăлмалла мар тăвăр. Чугун çулсен ĕçне дезорганизацилĕр, гитлерла бандитсем çӳрекен тата вĕсем валли боеприпассемпе хĕçпăшал турттаракан транспорта пăсăр. Хăвăр мĕн пĕтерсе тăкма пултарнине пĕтерĕр, Гитлера мĕн пулăшать, çавна пурне те пĕтерсе-пĕтерсе тăкăр!

Поляксем, çакна ан манăр: Польша—гитлерла йыткĕтĕвĕсен, сире чуралантаракансен тылĕ пулса тăрать. Польша урлă Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕ патнелле чи кирлĕ çулсем каçаççĕ. Транспорт ĕçне аркатса пырăр, кĕперсене сирпĕнтерĕр, нимĕçсен эшелонĕсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере ярăр!

Чехсем, çакна ан манăр: сирĕн çĕршыв—Гитлерăн питех те кирлĕ арсеналĕ пулса тăрать. Тупăсемпе танксем, боеприпассем туса кăларассине хирĕç саботаж тăвăр. Забастовкăсем организацилĕр, нимĕçсен склачĕсене взрывсем туса сирпĕнтере-сирпĕнтере ярăр, вăрçă материалĕсем турттарассине аркатса пырăр.

Югославин хастар та паттăр боецĕсем! Хăвăрăн хĕçпăшаллă вăйсене тĕреклетĕр, партизанла кĕрешĕве Балканри мĕнпур халăхсене явăçтарăр! Балканран Германипе Итали захватчикĕсене хăвалăр!

Болгарсем! Болгарие Гитлер майлă вăрçа туртса кĕртмелли преступниллĕ плансене аркатса тăкăр. Хăвăрăн тăванăрсене—сербсемпе кăнтăрти славянсене пулăшу пама алă тăсăр!

Нимĕçсем славянсене хирĕç, Совет çĕршывне хирĕç вăйпа хăваласа килекен славян салтакĕсем! Хĕрлĕ Çарпа унăн союзникĕсене хирĕç вăрçма пăрахăр, тăван çĕршывăрсене каялла таврăнма ыйтăр, Гитлерăн вăрă-хурахла вăрçине хирĕç кĕрешме салтаксен комитечĕсене тăвăр! Хĕрлĕ Çар енне куçăр.

Ирсĕр Гитлер Германири çар завочĕсенче ĕçлеме ирĕксĕрлесе хăваласа кайнă славянсем! Гитлерла захватчиксемшĕн каторгăра ĕçлеме пăрахăр! Забастовкăсем тăвăр, халех тăван çĕршывăрсене, хăвăрăн кил-йышăрсем патне каялла таврăнма ыйтăр! Фашистсен завочĕсене ишĕлтерĕр, вăрçă валли тăвакан продукцисене пăсăр!

Харпăрхăй тăван çĕршывĕн тулашĕнче пурăнакан тăван славянсем! Фашизма хирĕç кĕрешме хăвăрăн ретсене таччăнрах пĕтĕçтерĕр! Фашизма хирĕç кĕрешме славянсен комитечĕсене организацилĕр! Гитлеризма хирĕç, хăвăрăн тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, ирĕклĕхе юратакан демократиллĕ мĕнпур халăхсен çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешĕр!

Пусмăрти тăван славянсем! Ирĕклĕхшĕн пыракан халăх вăрçине çĕкленĕр, тăшманăн тискер хăйăкла ĕçĕсемшĕн, вăл пирĕн çĕршывсене варварла ишĕлтернĕшĕн, славянсенчен хăрушла мăшкăлланăшăн, пирĕн асапсемпе инкек-синкексемшĕн, пирĕн çухатусемшĕн, пирĕн арăмсемпе хĕрсен юнĕпе куççулĕсемшĕн тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр тавăрăр! Эпир, славянсем, ирĕклĕхе юратакан этемлĕхĕн аслă çарĕн боевой отрячĕ пулса тăратпăр. Пирĕнпе пĕрле Хĕрлĕ Çар тата унăн хăватлă союзникĕсем. Татăклă çапăçусен сехечĕ çитрĕ. Славянсем, алла хĕçпăшал тытăр! Тăшманăн хăватне мĕнпур вăйсемпе тата майсемпе аркатса пырăр! Нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсене çĕнтермешкĕн—малалла! Юнлă Гитлера, славянсен ылханлă тăшманне çапса аркатнă çĕре мĕнпур вăй-хăвата парар!

Славян халăхĕсен тăванлăхĕ сывă пултăр! Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ, генерал-лейтенант **Александр Гундоров.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн вице-председателĕ, Украина писателĕ, академик **Александр Корнейчук.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн вице-председателĕ, Прага университечĕн профессорĕ, академик **Зденек Неедлы.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн вице-председателĕ, Сербин общественнăй деятелĕ, профессор **Божидар Масларич.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн ответлă секретарĕ **Анатолий Лаврентьев.**

Украинăн Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **Михаил Гречуха.**

Белорусси халăхĕн представителĕ, генерал-лейтенант **Иван Камера.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, Польша писательници **Ванда Василевская.**

Академик **Николай Державин.**

Болгарин общественнăй деятелĕ **Стелла Благоева.**

Белорусси поэчĕ **Якуб Колас.**

Чехословаки çарĕн полковникĕ **Гелеодор Пика.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, Хорватин общественнăй деятелĕ **Юро Салай.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, словен журналисчĕ **Иван Регент.**

Вырăс композиторĕ **Дмитрий Шостакович.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, Югослави поэчĕ **Радуле Стийенский.**

Ленинград писателĕ **Николай Тихонов.**

Мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, Чехословакин общественнăй деятелĕ, Чехословаки парламенчĕн членĕ **Марек Чулен.**

Болгарин общественнăй деятелĕ **Фердинанд Козовский.**

Польша рабочийĕ **Александр Иочис.**

Мĕнпур славянсен Мускаври иккĕмĕш митингĕ

Апрелĕн 4-мĕшĕнче Мускавра пĕтĕм славянсен комитечĕ пуçтарнă мĕнпур славян халăхĕсен иккĕмĕш митингĕ пулса иртнĕ. Славян халăхĕсен пĕррремĕш митингĕ пулнăранпа 8 уйăха яхăн çитет. Çак уйăхсенче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче—Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕсе çитиччен тăсăлакан фронтра—пысăк улшăну пулса тăчĕ. Геройла Хĕрлĕ Çар, вăрçă ĕçĕнчи пуçарулăха тăшман аллинчен туртса илсе, тăшмана çинеçинех вирлĕн пырса çапса хавшатса çитерчĕ, темиçе çĕр вырăс тата Украина хулисемпе ялĕсене фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларчĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем чуралăхпа хĕнхур кӳрекен фашистсене хирĕç хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр хăюллăн кĕрешни пĕтĕм славян халăхĕсене хавхалантарать, вĕсем хăйсен ылханлă тăшманне çĕнтерессине шанса тăнине çирĕплетет. Халăхсене ирĕке кăларассишĕн пыракан вăрçăн таса вутçулăмĕ славян çĕршывĕсене хăватлă шурăмпуç пек çутатса ячĕ. Мĕнпур славян халăхĕсем фашизма хирĕçле халăхсен пĕрлĕхлĕ çемьине пĕрлешеççĕ. Днепрпа Сава, Влатвăпа Висла улăхĕсенче, ирĕке юратакан славянсем ăçта кĕрешеççĕ, çавăнта пур çĕрте те паттăррăн чĕннĕ сасă янăрать: «Гитлерпа унăн лакейĕсен чури пулмастпăр,—вилер те—çĕнтерер! Тытăр хĕçпăшал, славянсем!»

Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕнчи çынсем митинг трибуни çинчен хăйсен халăхĕсене çак татăклă тапхăрта чуралăх саракан нимĕç фашисчĕсене хирĕç татах та хаяррăнрах кĕрешме, пĕтĕм халăх вăрçин çулăмне вăйлăнрах чĕртсе яма, фашистла оккупантсене татах та вирлĕнрех пыра-пыра çапма, геройла Хĕрлĕ Çара вăй-хăвала шеллемесĕр хăватлăн пулăшса пыма чĕнчĕç. Вĕсем славян ывăлĕсене нимĕç фашисчĕсене хирĕç партизансен отрячĕсене тăрса çапăçма, ылханлă тăшмана вăрмансенчен, сăртсем çинчен пыра-пыра çапма, заводсенче, Германи çарĕсем валли хĕçпăшалпа боеприпассем туса кăларакан производствăра саботажсем тума чĕнчĕç; çавăн пекех уйăхирсенче те хăйсене чуралантаракансем валли тырпул акса тумалла мар тесе чĕнчĕç. Славян халăхĕн ывăлĕ, харпăрхăй çĕршывĕн патриочĕ—пĕр славян çынни те хальхи вăхăтра çак пархатарлă ĕçсенчен, этемлĕх историйĕнчи халăхсене ирĕке кăларассишĕн пыракан чи аслă вăрçăран аякра тăрса юлма пултараймасть.

Митинга мĕнпур славянсен комитечĕн председателĕ— Хĕрлĕ Çарăн генерал-лейтенанчĕ Александр Гундоров уçса калаçа уçрĕ.

Трибуна çине славян халăхĕсен представителĕсем пĕрин хыççăн тепри тухатуха сăмах калаççĕ. Вĕсем хушшинче: Украина писателĕ—академик Александр Корнейчук, белорусс поэчĕ—Якуб Колас, Польша писательници—Ванда Василевская, академик—Николай Державин, Прага университечĕн профессорĕ—Зденек Неедлы, сербсен общественнăй деятелĕ—Божидар Масларич, Чехословаки çарĕн полковникĕ—Гелеодор Пика, болгарсен общественнăй деятельници—Стелла Благоева, словен халăхĕн журналисчĕ—Иван Регент, Югослави поэчĕ—Радуле Стийенский, писатель—Николай Тихонов.

Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕ мĕнпур славян халăхĕсен пĕрлĕхне тата вĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăнине кăтартса паракан хăватлă демонстраци пулса тăчĕ. Çакăнпа пĕрлех çак митинг славян халăхĕсен активлăхне, вĕсем хăйсен нациллĕ ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес ĕçре пĕр чакмасăр малалла пынине, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсемпе славянсен ылханлă тăшманне—Германи фашизмне çĕнтерессишĕн çирĕппĕн тăнине кăтартса пачĕ.

Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингне радио тăрăх панă.

Митинг хăйĕн ĕçĕсене апрелĕн 5-мĕшĕнче малалла туса пынă. (ТАСС).

* * *

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Мускавра мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕн юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ.

Славян халăхĕсен представителĕсем трибуна çине пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Пурте вĕсем Германи фашисчĕсен тискер ĕçĕсем çинчен, оккупациленĕ славян çĕршывĕсене нимĕç фашисчĕсем халăх юнĕпе шӳтерни çинчен хăйсен тăван чĕлхипе каласа параççĕ, мĕнпур славян халăхĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç татăклăн кĕрешес ĕçре татах та таччăнрах пĕрлешме чĕнеççĕ.

Лару Украина ССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Михаил Гречуха каланă сăмахпа уçăлать. Унтан белорусс халăхĕн представителĕ—Хĕрлĕ Çар генерал-лейтенанчĕ Иван Камера, вырăс композиторĕ Дмитрий Шостакович, мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, Чехословакин общественнăй деятелĕ, Чехословаки парламенчĕн депутачĕ—Марек Чулен, мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ, хорватсен общественнăй деятелĕ Юро Салай, Польша рабочийĕ Александр Йочис, Болгарин общественнăй деятелĕ Фердинанд Козовский тата нимĕç поэчĕ Иоганнес Бехер тухса калаççĕ.

Малалла мĕнпур славянсен Мускаври иккĕмĕш митингĕн ячĕпе ютçĕршывсенчи тата Совет Союзĕнчи тĕрлĕрен организацисемпе уйрăм çынсенчен илнĕ саламлă çырусене вуласа параççĕ.

Митингри çынсем пĕтĕм чĕререн хавхаланса мĕнпур славян халăхĕсене чĕнсе каланине йышăнаççĕ. Чĕнсе каланине Ленинград писателĕ Николай Тихонов вуласа парать.

Чĕнсе каланин çулăмлă сăмахĕсем фашистла варварсен тискерлĕхне хаяррăн питлесе кăтартакан акт сăмахĕсем пек, славян халăхĕсен ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн тата вĕсен никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешессине вăйлатма чĕнекен паттăр сăмахсем пек янăраççĕ.

«Пусмăрти тăван славянсем!

Ирĕклĕхшĕн пыракан халăх вăрçине тухма çĕкленĕр!.. Пирĕнпе пĕрле Хĕрлĕ Çар тата унăн хăватлă союзникĕсем. Татăклă çапăçу сехечĕ çитрĕ. Славянсем, алла хĕçпăшал тытăр!..

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!»—теççĕ çав чĕнӳллĕ сăмахсем.

Çак чĕнӳ çине ответлесе, тăшмана тавăракан халăхсен аслă çарĕн речĕсене çĕнĕрен пиншер çынсем тăрĕç. Çак йыхăрав сасси славян халăхĕсем хушшинче: нимĕç варварĕсем çĕмĕрнĕ Белградра, ишĕлтернĕ Варшавăра, чех халăхĕн ывăлĕсен юнĕпе шӳнĕ Прагăра, Карпатпа Балкан сăрчĕсем хушшинче, Украина çеçенхирĕсенче, Белоруссипе Польша вăрманĕсенче, Днепр шывĕпе Ядран тинĕсĕн çыранĕсенче, Вислăпа Сенкер Дунай улăхĕсенче пур çĕре те кĕрешĕве чĕнекен чан сасси пек янтăраса илтĕнĕ.

Ирĕке юратакан славянсем хăйсен ылханлă тăшманне—Германи фашизмне хирĕç пĕрле тăрса кĕрешес ĕçре татах та таччăнрах пĕтĕçеççĕ. Славян халăхĕсен Гитлера хирĕçле хăватлă фрончĕ ӳсет, çирĕпленет. Мĕнпур славянсен Мускаври иккĕмĕш митингĕ тата вăл славян халăхĕсене чĕнсе калани пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса пачĕç: ирĕке юратакан мăнкăмăллă славянăн чунне, вăл хăйĕн çĕршывне юратнине тата вăл çĕнтерӳшĕн кĕрешме туртăннине çĕмĕрме пултаракан вăй пулман, пулас та çук!

Мĕнпур славянсен иккĕмĕш митингĕ, хăйĕн ĕçĕсене вĕçленĕ май, мĕнпур славянсен комитечĕ çумĕнче «Славяне» ятлă журнал кăларса тăма йышăннă. Ку журнал кашни уйăхра пур славян халăхĕсен чĕлхипе те тухмалла. Çакăнпа пĕрлех митинг хăйĕн материалĕсене те мĕнпур славян халăхĕсен чĕлхипе пичетлесе кăларма йышăннă. Митингра каланă сăмахсене, пĕррремĕш кунĕнчи пекех, радио тăрăх панă. (ТАСС).

СССР Цветной Металлурги Наркомачĕн 518-мĕш номерлĕ завочĕн работникĕсене наградăлани

Тăван çĕршыв оборонин нушисем валли продукци кăларас тĕлĕшпе Оборонăн Государственный Комитечĕ панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх СССР Цветной Металлурги Наркомачĕн 518-мĕш номерлĕ завочĕн работникĕсене наградăланă:

Ленин орденĕпе: цех мастерне **Г. М. Егорова,** завод директорне **С. М. Петрова.**

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—8 çынна;

«Знак Почета» орденĕпе—15 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе—17 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе—13 çынна наградăланă. (ТАСС).

ЯПОНИН ПОСОЛНЕ Н. САТО ГОСПОДИНА В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЙЫШĂННĂ

Апрелĕн 6-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ Японин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй çĕнĕ посолне Н. Сато господина йышăннă.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ Г. И. Бабашкин юлташа РСФСР пирăвăр промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ П. П. Микин юлташа, Наркомата ертсе пыма пултарайман пирки, РСФСР пирăвăр промышленноçĕн Халăх Комиссарĕн обязанноçĕнчен хăтарнă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать

Промышленность предприятийĕсенче Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту куллен-кун сарăлса пырать. Малта пыракан рабочисем çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ, программăра палăртнинчен те ытларах продукци кăларса фронта ăсатаççĕ.

Магнитогорскри 3-мĕш №-лĕ домнăн коллективĕ çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Вăл март уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарнă, 5 пин тонна ытла руда перекетленĕ, кокса сахалтарах расходланă.

Сучанскри горняксем çак кунсенче ăнăçлăн ĕçлеççĕ. 1-мĕш №-лĕ шахтăри забойщик Мартыненко юлташ 148 тонна çĕркăмрăкĕ кăларнă, вăл задание 700 процент пурнăçланă.

Горький хулинчи «Красное Сормово» заводри Горшенков юлташ бригадинчи сталеварсем март уйăхĕнчи заданине срокчен 8 кун малтан пурнăçланă. Бригада апрель уйăхĕнчи плана срокчен тултарассишĕн кĕрешет.

Новосибирск хулинчи Н. заводĕнчи стахановецсем çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем тунă. Токарь Нестеров сменăри задание 2.400 процент тултарнă. Шеников тимĕрçĕ нормăран иртерсе 11 хут ытларах продукци панă.

Памирски автотрестăн ремонтнăй мастерскойĕнче Скляров юлташ фрезернăй станокпа ĕçлесе пĕр уйăхра тумалли ĕçсене пĕр сменăрах туса пĕтернĕ.

Слесарь Клянченко сменăри задание 1.416 процент тултарнă. (ТАСС).

Куславкка комбиначĕ Çĕмĕрле комбиначĕпе ăмăртать

КУСЛАВККА. Комбинатра ĕçлекенсем ĕççыннисен чаплă уявне—Майăн 1-мĕшне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе паллă тума хатĕрленеççĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вĕсем апрель уйăхĕнчи задание 27 кун хушшинче тултарма, продукци туса кăларассине ӳстерме, вĕсен пахалăхне лайăхлатма обязательство илнĕ. Халĕ чылай цехсен коллективĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлаççĕ. Мазуренко юлташ начальник пулса тăракан цех коллективĕ март уйăхĕнчи задание срокчен тата ытлашшипе тултарнă. Цехри чи пултаруллă мастер Изотов юлташ сменинчи рабочисем нихăçанхинчен пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. ВКП(б) членĕ, слесарь Микельсонс, столяр Ваарес юлташсем сменăри нормăна кашни кун 2,5 иртерсе тултараççĕ. Куприянов, Павлов рабочисем те куллен икшер норма тултарса ĕçлеççĕ, слесарь Кочетков юлташ 3 нормăна çитерет.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура Калашников юлташ ертсе пыракан цехри рабочисем те хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ. Парти членĕ, слесарь Степанов, столяр Харинский, станочница Васильева юлташсем кулленхи заданисене 200—300 процент тултараççĕ.

ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă Н. Данилов, В. Айдаров çамрăксем те хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене панă заданисене пĕрмаях 220—225 процент тултараççĕ.

Куславкка комбиначĕн коллективĕ Çĕмĕрле комбиначĕн коллективне социализмлă ăмăртăва чĕннĕ. Чĕнĕве йышăннă, халĕ вĕсем хушшинче малти вырăна тухассишĕн кĕрешӳ пырать.

ĂМĂРТУ ТИВЛЕЧĔСЕМ

Улатăр узелĕнчи железнодорожниксем, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Кăмрăк складĕнче ĕçлекенсем Шиянов, Праухин тата Нужин юлташсем нормăна кашни кун 3 хут иртерсе тултараççĕ. Çавăн пекех депори Ситов, Федоров тата Лазарев слесарьсем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче депори машинист Николотовпа унăн помощникĕ Дидяев паттăр ĕç тунă. Паровоз топкине пăхнă чух колосниксем çĕмĕрĕккине асăрханă. Поезда çаплипе çул çине илсе тухма май пулман. Вăхăта пĕр минута та сая ямасăр Николотовпа Дидяев юлташсем сунакан топкăна черетлĕн кĕре-кĕре тухнă. Çур сехет хушшинче вĕсем колосниксене юсанă. Поезд çитмелли çĕре вăхăтра тата чиперех çитнĕ.

Николотовпа Дидяев юлташсен паттăр ĕçне тивĕçлипе хакланă. Вĕсене «Почетному железнодорожнику» ятлă значокпа наградăлама тăратнă.

П. СЕРГЕЕВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума укçа пухаççĕ

КАЛИНИНО. Юнтапари тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем «Пионер Чувашии» танк тунă çĕре 600 тенкĕ укçа хывнă.

В. МАЛЬЦЕВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Тăрăнри тулли мар вăтам шкул коллективĕнче «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕç сарăлсах пырать. Паянхи куна пурĕ 482 тенкĕ пухнă.

А. НИКОЛАЕВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 6-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 5-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсем çинче нимĕçсен 119 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 5-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 2 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 30 лавне, горючи тултарнă 2 автоцистернине, 16 полевой тата зенитнăй орудине, 2 прожекторне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 12 вагона çĕмĕрнĕ, наблюдени аэростатне персе антарнă, боеприпассем хунă 2 склада тата горючи хунă пĕр склада сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрнере, мартăн 29-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 4-мĕшне çитиччен, нимĕçсен авиацийĕ 296 самолет çухатнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 67 самолет пĕтнĕ.

* * *

Березин юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн гвардейски часть (Калинин фрончĕ) халăх пурăнакан 7 пункта нимĕçсенчен ирĕке кăларнă, 3 оруди, 2 миномет тата 300 снаряд тытса илнĕ. Тăшманăн тылĕнче боеприпассем хунă склада сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра Мищенко юлташ командир пулса ертсе пыракан часть икĕ кун хушшинче гитлеровецсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă, 6 ДЗОТ тата 9 огневой точка çĕмĕрнĕ. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, чаçри боецсем «Ю-88» йышши 2 самолета ӳкернĕ. Самолетсен экипажĕсене, 10 çынна, тыткăна илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче противника хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.300 çынна пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 14 станковăй пулемет, пулеметсем валли запасра тăракан 26 ствол, 3 миномет, 15 автомат, 154 винтовка, 58.200 винтовка патронĕ, 550 снаряд, 500 мина тата çавăн чухлех ракетăсем, радиостанци тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшал.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн гвардейски часть, малтан йышăнса илнĕ рубежа хӳтĕлесе, противникăн контратакине сирсе янă. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна çити вилсе тата аманса пĕтнĕ. Нимĕçсен 5 танкне тата 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн стрелковăй часть пĕр кун хушшинче 350 гитлеровеца яхăн пĕтерсе тăкнă, пĕр миномет, 5 автомат, 50 винтовка, 400 граната, 900 мина тата 22.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче С. юлташăн партизанла отрячĕ хăюлăн кĕрешет. Отрядри боецсем темиçе кун хушшинче çакăн пек боевой операцисем туса ирттернĕ: Д. ялĕнче партизансем халăха çаратакан нимĕçсен 3 салтакне пĕтерсе тăкнă. Отрядри боецсем çав ялтан инçех те мар засада тунă. Часах нимĕçсен 400 çынран тăракан колонни курăнса кайнă. Совет патриочĕсем пулеметсенчен персе нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 56 çынна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр куне разведка Х. ялĕ патнелле 40 нимĕç çывхарса пыни çинчен пĕлтернĕ. Партизансем гитлеровецсен флангне пырса тухнă та пеме пуçланă. Тăшманăн салтакĕсене 20 çынна вĕлернĕ. Çак кунсенче партизансем татах тепĕр ял патĕнче ăнăçлă операци туса ирттернĕ. Ял патнелле нимĕçсен 600 яхăн штыкран тăракан отрячĕ çывхарса пынă. Партизансем кĕске вăхăта пынă тытăçура çав отрядри нимĕçсен 67 салтакне пĕтерсе тăкнă. Пилĕк кун хушшинче тăшманран 9 пулемет, 3 автомат, 48 винтовка, 7 пистолет, 5 бинокль, 10.000 винтовка патронĕ тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕ Эрис Вач Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне нумаях пулмасть лекнĕ. Арăмĕпе ывăлĕ патне яма çырнă çырура вăл хăй мĕн курса тӳссе ирттерни çинчен каласа кăтартать. «Смоленска поездпа çитрĕмĕр. Кунтан эпир фронт линине кайрăмăр. 10 кун хушши утрăмăр. Çăкăр пĕтĕмпех пĕтсе çитрĕ. Выçă пурăнма пуçларăмăр, нимĕн те турттарса килмеççĕ. Вырăс летчикĕсемпе партизансем пирĕн çине тапăнсах тăчĕç, çухатусем кӳчĕç. Партизансем вăрманта е çулсенчен аякра ларакан ялсенче вырнаçнă. Пурте партизанра тăраççĕ: арçынсем, хĕрарăмсем, çул çитмен çамрăксем. Партизансен аллинчен пирĕн салтаксем ĕнтĕ нумай пĕтрĕç. 11-мĕш кунĕнче фронт линине çитрĕмĕр. Юлашки 5 кун хушшинче эпир пĕр татăк çăкăр та курман. Пире, выçăскерсене, çапăçăва кĕртсе ячĕç. Çапăçу мĕн пачĕ? Пирĕн рота 65 çын çухатрĕ. Эпир малалла куçасшăнччĕ, анчах та вырăссем пирĕн атакăсене пурне те сирсе ячĕç те, эпир каллех каялла чакрăмăр. Вырăс салтакĕсем паттăр та хăюллă... Ĕнер вырăссем пирĕн 404-мĕш полка çавăрса илнĕ. Эпир унтан 4 километрта тăратпăр. Мĕн пулĕ ĕнтĕ пирĕнпе? Эрнекун пире 4 кунлăха тесе пĕр пĕчĕк татăк çăкăр пачĕç. Анчах та салтаксем нумайăшĕсем ăна 10 минута хушшинчех çисе ячĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем каялла чакса кайнă чухне Смоленск облаçĕнчи Пинашино ялне çĕрпе танлаштарса хăварнă. Ялти мĕнпур халăха, вăл шутра пĕчĕк ачасене те, пĕтĕмпех çунтарса янă.

* * *

Хемниц районĕнчи (Германия) çар заводĕсенчен пĕринче юлашки вăхăтра саботаж туни чылаях ӳссе кайнă. Пĕр февраль уйăхĕнче кăна çав заводра машинăсене тĕрлĕ майпа 179 хутчен çĕмĕрнĕ. Çавсене пула уйрăм цехсем продукци кăларасси палăрмаллах чакнă. Ĕç тухăçлăхĕ январьтипе танлаштарсан, 21 процент ӳкнĕ. Мартăн малтанхи кунĕсенче полици, завод дирекцийĕ ыйтнипе, ютçĕршыв рабочийĕсене пит те нумайăшне арестленĕ пулнă. Çавна хирĕçлесе заводра забастовка пуçланнă. Гитлеровецсен арестленĕ рабочисене ирĕксĕрех пурне те ирĕке кăларма тивнĕ.

Апрелĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче, совет войскисем çак кунсенче тытса илнĕ халăх пурăнакан пунктсене каялла тавăрас тесе, нимĕçсем танксем пулăшнипе контратака туса пăхнă. Пирĕн боецсем, противника сирсе пăрахса, нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ тата 5 пулемет тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 яхăн вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем икĕ кун хушшинче тăшманăн 17 дзочĕпе блиндажне, пулеметсен 5 йăвине, 2 наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн войскăсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 11 пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Тăшман чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Трофейăсем тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн часть противникăн пехотине пĕр ротăна çити, 20 пулемет тата 25 дзотпа блиндажа пĕтерсе тăкнă. Пирĕн йывăр танк çав çапăçура нимĕçсен 4 орудине тата пулеметсен 7 йăвине таптаса çĕмĕрнĕ.

* * *

Красноармеецсен Шелингер юлташ ертсе пыракан групписе командованин заданийĕ тăрăх противникăн тылне кĕрсе кайнă. Нимĕçсем пирĕн боецсене çавăрса илме пултарнă. Совет патриочĕсем, тăшмана хирĕç çапăçма тытăнса нимĕçсенункине татса тухнă та хăйсен чаçне çитнĕ. Çав çапăçура Шелингер юлташ хăех нимĕçсен пĕр офицерне тата 6 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград партизанĕсен В. тата Т. юлташсем командир пулса ертсе пыракан пĕрлештернĕ темиçе отрячĕ пĕр уйăх хушшинче 700 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансен отрячĕсенчи боецсем чугунçул йĕрне икĕ хутчен взрыв туса сирпĕнтернĕ тата çулсем çине минăсем хурса тухнă. Минăсем çине пырса кĕрсе, противникăн грузсемпе пехота турттарса пыракан 30 машини сирпĕнсе кайнă.

* * *

Нимĕç салтакĕ Эрик Мерке нумаях пулмасть хăйĕн тăван çĕршывне çапла çырнă: «Йĕри-тавраха вилĕ... Ялсенче хĕрарăмсемпе ачасем кăна тăрса юлнă. Арçынсем çук. Вĕсем пурте партизана тухса кайнă. Çавăнпа та кунта питĕ хăрушă. Кашни асăрхамасăр пуснă утăм вилĕм патне илсе çитерет. Кашни кĕтесренех пирĕн çине переççĕ. Пĕчĕкçĕн çӳреме кунта хăрамалла. Ялтан пĕр километра каяс пулсан та 4 салтакран кая мар яраççĕ. Çакăн пек туни те пысăк хăрушлăхпа çыхăнса тăрать.

Партизансем мĕн кирлипе пуринпе те хĕçпăшалланнă. Вĕсем фронт линийĕн ку енче, вĕçĕ-хĕррисĕр вăрмансенче йăва çавăрнă, унта вĕсем продовольствипе боеприпассем усраççĕ тата радиопа усă кураççĕ. Вĕсене тупма йывăр. Вĕсем пирĕн район тăрăх кунĕн-çĕрĕн çӳреççĕ, кĕтмен çĕртен çиçĕм пек сиксе-сиксе тухаççĕ те пирĕн çине тапăнаççĕ, унтан çавăн пекех çиçĕмле пытанаççĕ».

* * *

Нимĕçсен «Викинг» дивизийĕн «Нордланд» полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак-норвежец Асбьерн Бекстрем çапла каласа панă: «Нимĕçсем оккупациленĕ совет районĕсенчи çынсене питĕ тискеррĕн тыткалаççĕ. Салтаксем хурах пусса çӳреççĕ, мирлĕ çынсене çаратаççĕ, мĕн тупнă çавна илсе тухса каяççĕ. Генрих Райбертпа Ганс Мюллер салтаксем пĕр хресчен хĕрарăмĕнчен хур туртса илнине эпĕ хамах курнă. Хĕрарăм хирĕçме тытăнсан, Райберт ăна кăкăртан штыкпа чикрĕ».

* * *

Партизансен нумай йышлă отрячĕсем Боснири (Югославия) мĕнпур хуласене тенĕ пекех çавăрса илнĕ. Облаçра мĕнпур чугунçулсемпе çуртĕрсене аркатса тăкнă. Çавăрса илнĕ хуласенче нимĕçсемпе итальянецсен пысăк гарнизонĕсем тăраççĕ. Партизансемпе оккупантсен осадăри войскисем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çак кунсенче нимĕçсем Приедор хулинчи партизансен унине татса тухса хăйсен войскисемпе пĕрлешме хăтланнă. Партизансем, гитлеровецсем çине тапăнса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Гитлерла провокаторсен Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ирсĕр ĕçĕсем

АНКАРА, апрелĕн 3-мĕш. (ТАСС). Гитлерла пропагандистсем Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче хăйсен провокациллĕ ĕçне сарнăçемĕн сарса пыраççĕ. Вĕсем Совет Союзĕ Ирана хăратса тăрать тесе улталаса, хăйсен тĕп шухăшне пытарма хăтланаççĕ. Гитлерла пичет валли советсене хирĕçле элек сарас ĕçе Турцин Адан хулинчи нимĕç агенчĕсем туса пыраççĕ. Германин Трансоцеан агентствин Анкарари отделенийĕ те çав ĕçех туса пырать. Çав отделенине Çывăхри Хĕвелтухăç енĕпе «специалист» пулса тăракан «доктор» Шмитц ертсе пырать. Шмитц Турцие пыриччен малтан Иракра, Сирире, Трансиорданире тата Египетра çапкаланса çӳренĕ, çав çĕршывсенчен ăна корреспондент ĕçĕпе нихăçан енчен те сыхăнман ĕçсем тунăшăн хăваласа янă пулнă. Халĕхи вăхăтра çав провокацисен «докторĕ» Гитлерла хаçатсем валли Совет Союзне тата Англие хирĕçле элексем хатĕрлесе тăракан центр тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Çав «докторăн» хăйне кура помощникĕсем те пур; вĕсем çаксем: нимĕçсен «Франкфуртер цейтунг» хаçачĕн корреспонденчĕсем Вольфон Цевалипе Герберт Ханниг, «Зюдостэхо» хаçатăн корреспонденчĕ Герберт Кнолл, çавăн пекех тата «Фелькишер беобахтер» хаçатпа «Ангрифф» хаçатăн корреспонденчĕ Рихард Петерс.

Суя материалсем хатĕрлесе тăракансенчен тепри, вăл—Германин информаци бюровĕн (ДНБ) Стамбулри отделенийĕ. Унăн руководителĕ Вальтер Брель Балканри çĕршывсенче тĕрлĕ ирсĕр ĕçсем тунипе паллă пулнă. Пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх, вăл Турцири Гитлерла организацин руководителĕ пулса тăрать. Германи хаçачĕсен тĕрлĕ корреспонденчĕсемсĕр пуçне унăн аллинче тата «ДНБ»-н пилĕк корреспонденчĕ пур. «ДНБ»-н Стамбулри отделенийĕн тĕп ĕçĕ вăл—Англие хирĕçле пропагандăна ертсе пырасси тата Сирире, Иракпа Египетра ирсĕр ĕçсем тăвасси пулса тăрать. Хăйĕн ĕçĕнче Брель Германин нумаях пулмасть кăна Хатайра организациленĕ консульствипе усă курать. Çак консульство, нейтральнăй çынсем пĕлтернĕ тăрăх, эмигрантсене—Германи майлă ĕçлекен арабсене тата ыттисене те Çывăхри Хĕвелтухăçне ирсĕр ĕçсем тума хăнăхтарас тĕлĕшпе ĕçлет.

Германи «корреспонденчĕсемсĕр» пуçне, çак гитлерла пропагандăн центрне тата Итали, Венгри, Болгари тата Германин ытти «союзникĕсен» хаçачĕсен корреспонденчĕсем те пулăшса пыраççĕ. Пурте вĕсем Анкарари «докторсен» суйисене сараççĕ.

Халĕхи вăхăтра гитлерла агентсем Иранри, Иракри тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсенчи пекех курд йăхĕсем хушшинче те пăлханусемпе восстанисем тăвасшăн хыпаланаççĕ. Юлашки уйăхсенче Германи агентури курдсен Турци чиккинчи хăшпĕр йăхĕсене халăхи хĕçпăшалсем питĕ нумай тăратнă. Нейтральнăй çынсем пĕлтернĕ тăрăх, курд йăхĕсене восстанисем тутарни гитлеровецсен мосульски нефть источникĕсене тытса илес планне пурнăçланă çĕрте пысăк вырăн йышăнса тămалла.

Лайăх пĕлсе тăракан ютçĕршыв çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Гитлерăн ятарласа янă курьерĕ Розер, нумаях пулмасть кăна Турцие çитнĕскер, хăйпе пĕрле уйрăм курд йăхĕсен çулпуçĕсем валли, Иранпа Иракра укçа парса хăйсем майлă çавăрнă çулпуçсем валли инструкцисем илсе килнĕ. Çав çулпуçсен отвечĕсене нимĕçсен Турцири çар атташи Роде Гитлера хăй аллипе хăй памалла мĕн.

Гитлеровецсен Иранпа «курдсен ыйтăвĕ» пирки хăйсен пропагандине сарса пĕр тĕллев тытаççĕ, вĕсем Турци чиккинче курдсен йăхĕсене нимĕçсен укçипе восстание çĕкленине Турци влаçĕсенчен пытарасшăн. Çакна палăртаççĕ: çак ĕçсем Германин Иранри тата Иракри нефть источникĕсене тытса илес планăн пĕр пайĕ пулса тăрать, теççĕ.

Болгарире тревога пулнă

СОФИЯ, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Ĕнер, каçхине 11 сехет те 10 минутăра, Софире тревога пулнă. Тревога сехет ытла пынă. Болгарин паян пичетлесе кăларнă коммюникинче кăтартса панă тăрăх, çав тревогăна Болгари çийĕпе Ютçĕршыв самолечĕсем вĕçсе иртсе кайнă пирки пĕлтернĕ. Коммюникере «нимĕн те пулса иртмен», тесе кăтартса панă.

ТАСС асăрхаттарни: Болгария çавнашкал пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă май, Берлинри тата Римри радио «Болгари çийĕпе Совет самолечĕсем вĕçсе иртсе кайнă», текен хыпар сарнă. ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çав хыпарсем вĕсем — пуçран шухăшласа кăларнă киревсĕр япаласем, çав хыпарсене Берлинри тата Римри радио провокаци тăвас тĕллевпе сарни уççăнах паллă.

Чех хресченĕсем нимĕç влаçĕсене тырăсем пама килĕшмеççĕ

СТАМБУЛ, апрелĕн 5-мĕш. (ТАСС). Чех хресченĕсем влаçсене тырăсем пама килĕшмесĕр хирĕçсе тăраççĕ. Ютçĕршыв учрежденийĕсем илнĕ сведенисем тăрăх, нимĕçсем хресченсене «экономикăллă саботаж» тунăшăн вуншарăн перепере пăрахаççĕ. Арестленипе тата персе пăрахнипе пĕрлех, гитлеровецсем хресченсем çине тем тĕрлĕ штрафсем хурса тултарнă. «Дер Нейе Таг» хаçат штраф тӳлемелле тунă хресченсен списокне пичетлесе кăларнă. Вĕсене мĕнпурĕ 2.142.000 крон штраф тӳлеттермелле тата тĕрмене хупса лартмалла тунă. Çав хресченсем реквизици туса çӳрекен комиссисенчен хăйсен тыррисене пытарса тăнă. Хаçат кунсерен вуншар хресчен хушамачĕсене пичетлесе кăларать. Вĕсене пурне те государствăна тырă паманшăн штраф тӳлеттермелле е тĕрмене хупмалла тунă.

Нимĕçсем Францин çыранĕсене сыхлас ĕçе вăйсăрлатнă

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ялхуçалăхĕнче ĕçлекен пĕр рабочи-француз ирĕклĕ Францин çарне кĕрес шутпа Францин оккупациленĕ зонинчен пулăçсен пĕчĕк кимми çине ларса тухса тарнă. Вăл çапла каласа панă: «Тарма хăрушах мар, мĕншĕн тесен Францин çыранĕсене сыхлас ĕçе халĕ чылаях вăйсăрлатнă», тенĕ. «Юлашки вăхăтра,— тенĕ çав рабочи, — Францин çыранĕсенче Германи салтакĕсем питех те сахал тăрса юлчĕç. Хутран-ситрен самолет е патрульре çӳрекен катера курма пулать, час-часах темиçе кун хушшинче пĕрре мĕнле те пулин хурал судни пырса тухать. Хĕл пуçланиччен çырансене сыхлас ĕç питĕ çирĕпччĕ. Кунта халĕ хутран-ситрен кăна пĕр-пĕр моряка, пуринчен ытла отпускра çӳрекенскере, тĕл пулма пулать, хăш чухне тата пĕр-пĕр летчика тĕл пулатăн. Ĕлĕкрех кунта орудисем, пысăккисем те, пĕчĕккисем те тем чухлехчĕ, халĕ вĕсене пурне те кунтан илсе кайнă. Çыронсен хуралĕ, тĕрĕсрех каласан, халĕ çук та. Тинĕс хĕррипе темиçе миля каятăн, пĕр нимĕç салтакне те курмастăн. Темиçе уйăх хушшинче эпĕ çыранра пĕр танк та тĕл пулмарăм».

Румынире заем облигацийĕсене вăйпа сараççĕ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Румыни правительстви нумаях пулмасть вăрçă тăкакĕсене саплама заем кăларнăччĕ. Анчах çав заем облигацийĕсене илекенсем пачах та пулман. Çакна Германи пичечĕ те ирĕксĕрех йышăнать. «Франкфуртер цейтунг» хаçат çапла çырать: Румыни правительстви кăларнă заем тăрăх пухăнмалли укçа «кирлĕ чухлĕ пухăнман», çавăнпа ăна сармалли срока тăсма тивнĕ. Заема сарас тĕлĕшпе Румыни правительстви питех те хаяр мерăсем йышăннă. Халĕ Румынире çав заема хăйсен доходне тивĕçлĕ чухлĕ çырăнса илмен çынсем валли ятарласа уйрăм налог шутласа кăларнă. Заем илме килĕшмен рабочисемпе служащисенчен çав асăннă налога пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ тытса юлаççĕ. Акцисем тытакансен тата суту-илӳ е промышленность предприятийĕсен хуçисен пĕлтĕр тӳленĕ налогсен суммине шутласа 35 процент тӳлемелле. «Франкфуртер цейтунг» хаçат çырнă тăрăх, Румыни правительстви çак мерăна средствăсем пачах та çитмен пирки кăна мар йышăннă, ăна вăл инфляци пуласран хăранă пирки халăхăн тавар илес пултарулăхне чакарас шутпа та йышăннă.

Румыни пичечĕ заем çырăнса илме килĕшмесĕр тăракансене темле пысăк айăпсем тупса айăплассипе те хăратать. Хаçатсенче воззвани пичетленĕ. Воззванире çапла каланă: «Кам заем илме çырăнмасть, вăл—дезертирсен шутĕнче тăрать. Ку тĕлĕшпе нимĕнле улшăнусем те пулмаççĕ. Паянах заем илме çырăнăр», тенĕ.

Испанири террор

НЬЮ-ИОРК, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Гаванăра (Кубăра) тухакан «Нотисиас де Ой» хаçат çапла пĕлтерет: юлашки вăхăтра Испанин антифашистла деятелĕсене хирĕç çĕнĕрен вăйлă террор пуçласа янă.

Март уйăхĕнче вĕçленнĕ процесра Испани республикин деятелĕсене 33 çынна персе вĕлермелле тунă. Вĕсен шутĕнчен хаçат Исилар Диегесе палăртать. Вăл Испани халăхĕн паттăр ывăлĕ. Хаçат уйрăмăнах Исилар Диегес 1936 çулта Мадрида хӳтĕлес ĕçе йĕркеленĕ çĕрте вăйлă ĕçленине асăнать. Испани республикин ытти паллă деятелĕсене те сахал мар персе пăрахнă. Вĕсен шутĕнче Испани çамрăкĕсен социалистла пĕрлешӳллĕ Союзĕн Центральный комитечĕн членĕсене Касорлпа Месона та персе вĕлернĕ. Фалангистсем, — тет хаçат, — Андалузири хресченсен массисен представителĕсене те шеллемен.

Англи бомбардировщикĕсем Рейн облаçĕ çине тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Рейн облаçĕ çине пырса тапăннă. Кунсăр пуçне Кельн çине, Гаврти доксем çине тата Париж çывăхĕнчи Женвильери пĕр завод çине бомбăсем пăрахнă (çав завод противник валли авиаци моторĕсем тата ытти тĕрлĕ материалсем кăларса тăрать).

Çав операцисене Англин 300 бомбардировщикĕ хутшăннă, вĕсенчен 5 бомбардировщикĕ хăйсен базине таврăнман.

Англи авиацийĕ Матфор завочĕ çине вĕçсе пырса тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Париж çывăхĕнчи автомобильсем тăвакан пит те пысăк Матфор завочĕ çине вĕçсе пырса тапăннă чухне ӳкерсе илнĕ фотографи ӳкерчĕкĕсем çакна питех те лайăх кăтартса параççĕ: бомбăсене çавтери тĕрĕс тĕл пăрахнă, завода питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Матфор завочĕ Рено завочĕпе пĕрле Германи çарĕ валли кашни уйăхра 2 пине яхăн грузовой автомобильсем кăларса тăнă, урăхла каласан вăл Германи валли Францире туса кăларакан грузовой автомобильсен шутĕнчен çурри пулать. Çавăн пекех тата завод кашни уйăхрах 400 грузовик тумалăх детальсем кăларса тăнă, ку детальсене вара урăх вырăнта пухса тăнă.

Фотоӳкерчĕксем завод тĕлĕнче тем пысăкĕш хура тĕтĕм йăсăрланса хăпарнине, унтан вара çав тĕтĕм сахалтан та пĕр миля таран йĕри-тавра сарăлса тăнине кăтартаççĕ. Çав тĕтĕме пула бомбăсем хăш тĕле ӳкнине тĕп тĕрĕссипех палăртма май килмен, анчах та пысăк пушарсен хĕрлĕ çулăмĕ таçтанах курăнса тăнă. Завод çине тапăнса бомбăсем пăрахнă самолетсем—çавтери пысăк «Веллингтон» тата «Стирлинг» текен самолетсем пулнă.

Япони çухатăвĕсем çинчен Америкăра официальнăй йĕркепе пĕлтерни

ЛОНДОН, апрелĕн 6-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Çар министерстви пичетлесе кăларнă коммюникере пĕлтернĕ тăрăх, Лăпкă океанра вăрçă пуçласа Пирл Харбор çине тапăннă вăхăтранпа японецсен тĕрлĕ йышши суднисем мĕнпурĕ 132 судно пĕтнĕ. Японин çав суднисене Америка флочĕ путарнă е сиенленĕ.

Японин пĕр авианосецне, пĕр гидроавианосецне, 8 эсминецне, виçĕ подводнăй лодкине, пĕр миннăй тральщикне, пĕр канонеркине тата патрульре çӳремелли 2 суднине путарнă. Японин пĕр линкорне тата виçĕ гидроавианосецне, 7 эсминецне, пĕр подводнăй лодкине, пĕр канонеркине сиенленĕ.

Японин грузсем турттармалли тата суту-илӳ тумалли 22 пароходне путарнă тата 3 пароходне сиенленĕ, грузсем турттармалли тата çав вăхăтрах пассажирсем илсе çӳремелли 7 суднине путарнă.

Стаффорд Криппс Инди лидерĕсемпе калаçни

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Аллахабадри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 3-мĕшĕнче мусульмансен лигин черетлĕ сессийĕ уçăлнă. Сессие уçнă чухне лига председателĕ Джинна çапла каланă: лигăн тĕп тĕллевĕ вăл — Пакистана, урăхла каласан, Индие икĕ государствăна уйăрасси, пĕри — индуссен государстви, тепри — мусульмансен государстви. Çавна шута илмен кирек мĕнле сĕнĕве те лига йышăнас çук. Джинна хăй Криппспа Делире тата тепĕр хут тĕл пулса калаçасси çинчен пĕлтернĕ. Халĕ мусульмансен лигин исполком бюровĕ Англи сĕнĕвĕсене пăхса тухать.

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Делирен пĕлтернĕ тăрăх, Стаффорд Криппс генеральнăй штабăн начальникĕ генерал Уэйвелл патĕнче пулнă. Калаçу сехет çурă пынă. Криппс конгресс председателĕпе Азадпа тата Джавахарлал Нерупа çĕнĕрен татах та тĕл пулса калаçасса кĕтеççĕ.

Ютçĕршывсенче

● Рио-де-Жанейрора мункун умĕнхи эрнекуна уявланă чухне кăçалччен тем чухлĕ халăх пухăнса Иуда сăнне çунтарса яраканччĕ. Кăçал Иуда сăнĕ вырăнне Гитлер сăнне çунтарнă.

● Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государственнăй департаменчĕ Браззавилльре Америкăн консульствине уçнă. Юнайтед пресс агентстви кăтартнă тăрăх, Америка правительстви ирĕклĕ Францин Африкăри влаçĕсемпе çыхăну тытма пуçланă.

● Германи блокадине витĕр тухса Норвегин темиçе судни Гетеборгран Англие çитнĕ.

● Монтевидеора мартăн 20-мĕшпе 22-мĕш числисем хушшинче рабочисен конгресĕ пулса иртнĕ. Конгресра Уругвайри рабочисен центральнăй союзне организациллемелле тесе решени йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Пирĕн колхозсенче хĕрарăмсем пысăк вăй пулса тăраççĕ. Вĕсем колхоз производствин пур участокĕсене те активлăн хутшăнаççĕ. Уйрăмах халĕ, çĕршывра отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра, хĕрарăмсен ĕçри активлăхĕ пысăккăн ӳсрĕ. Вĕсем колхозсенче чи маттур ĕçлекенсем пулса тăчĕç. Хĕрарăмсене ĕçлеме лайăх майсем туса парас шутпа Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ялхуçалăх ĕçĕсем хĕрӳллĕн пынă вăхăтра республикăри колхозсенче ача яслисемпе площадкăсем тăвасси çинчен постановлени йышăннă.

Ача яслисемпе площадкăсем организацилени питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕсене организациленипе пиншер колхозницăсем кăçал уй-хир ĕçĕсенче туллин ĕçлеме пултараççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кăçал республикăри колхозсенчи яслисенче 31.420 ачана тата площадкăсенче 40.280 ачана пăхса усрамалла тума йышăннă. Сăмахран, пĕр Ишлей районĕнче кăна ача яслисемпе площадкăсем 111 колхозра уçăлмалла, яслисенче—1100 ача, площадкăсенче — 2000 ача вырнаçтармалла. Сĕнтĕр районĕнче ача яслийĕсемпе площадкăсем 113 колхозра пулмалла, яслисенче 1500 ача, площадкăсенче 2.000 ача вырнаçтармалла. Çĕрпӳ районĕнче та яслисенче—1500 ача, площадкăсенче—2200 ача пулмалла. Çапла кашни района уйрăмăн кăтарту панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çак пысăк та ответлă ĕçе тивĕçлипе организацилеме Чăваш АССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа тата райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе колхоз председателĕсене хушнă. Сураки пуçланнă тĕле колхозсенче яслисемпе площадкăсем уçăлмалла. Вĕсене валли çуртсем, оборудованисем тата апат-çимĕçсем хатĕрлесе çитермелле.

Сутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров тата Сывлăх Халăх Комиссарĕ Лихачев юлташсене колхозсенчи ача яслисемпе площадкăсенче ĕçлеме медицина работникĕсемпе воспитательсем çителĕклĕ таран хатĕрлеме хушнă. Кĕске срокла курссемпе семинарсем организацилесе, Майăн 1-мĕшчен яслисем валли сестрасем—950 çын, воспитательсем—1.600 çын вĕрентсе хатĕрлемелле. Яслисемпе площадкăсенче ĕçлеме вăтам шкулсен аслă класĕсенче тата педучилищĕсенче вĕренекенсене, колхоз уй-хирĕсенче ĕçлеме пултарайман колхозницăсене явăçтармалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Лихачев юлташа ача яслисемпе площадкăсене сывлăх енчен сыхласа тăма вĕсем çумне медицина работникĕсене çирĕплетме хушнă. Уйра хĕрӳ ĕç пынă вăхăтра колхозсем хăйсем йышăннипе площадкăсене талăкĕпех ĕçлемелле тума сĕннĕ. Райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе ВКП(б) райком секретарĕсене ачасен яслисемпе площадкăсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăма хушнă.

—o—

Совет Союзĕ тăрăх

▲ Март уйăхĕнче Ашхабад деповĕнчи машинистсем — Козленков, Масюков, Лазарев юлташсем тата паровозсем çӳретекен ытти юлташсем 60 тоннăпа яхăн нефть перекетленĕ.

▲ Таджикистанăн кăнтăрти пайĕнче ăшă, хĕвеллĕ кунсем тăраççĕ. Вахша улăхĕнче тюльпансем, улмуççисем, миндальсем чечеке ларнă.

Колхозсен уйхирĕсенче Египет çĕрмамăкĕн калчисем вăйлăн ешереççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

С 8 апреля работа

БАНИ

организуется в две смены: с 7 часов утра до 1 часа ночи.

Для профилактического ремонта и дезинфекции устанавливается общий выходной день по понедельникам.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ

ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянники, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто, наборщик типографии, электромонтеры, ящечники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ

ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.

6—5

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 439 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.